27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
5
ЮНКУН
68(6563) №.

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва анлӑн сарса ярар

Май уявӗ ҫывхарса килет. Ана кашни ҫулах социализмлӑ ӑмӑртӑва ҫӗнӗ вӑйхавӑтпа сарса пынипе, производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем туниле кӗтсе илесҫӗ. Кӑҫалхи май уявӗ умӗн Тӑван ҫӗршывра кашни предприяти коллективӗ, кашни патриот нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма хамӑрӑн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассишӗн уйрӑмах хастарлӑн, пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеме тивӗҫлӗ.

«Чӑваш Коммуни» хаҫатра Мускаври станоксем тӑвакан Ленин орденлӗ «Красный Пролетарий» завод коллективӗ Совет Союзӗнчи промышленноҫпа транспортри пӗтӗм рабочисене, работницӑсене, инженерпа-техника работникӗсене, хайсен мӗнпур ресурсӗсене мобилизацилесе, хайсен мӗнпур майсене усӑ курса, май уявӗ умӗнхи ӑмӑртура продукци туса кӑларассине тата ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерме, тракторсем валли запаслӑ пайсем тума, подсобнӑй хуҫалӑхра ҫуракине кӑтартуллӑн ирттерме обязательствӑсем илчӗҫ. Вӗсем Совет Союзӗнчи промышленноҫпа транспортри мӗнпур рабочисене тата инженерла-техникла работникӗсене май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва организацилеме чӗнчӗҫ.

Пирӗн республикӑри промышленноҫпа транспорт ӗҫӗнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем те ҫак лаха чӗнӗве хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Вӗсем май уявне производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илеҫ. Ӑна тума тивӗҫлӗ те. Пирӗн республикӑри малта пыракан заводсемпе фабрикӑсем, промысла кооперацийӗпе вырӑнти промышленноҫӑн артелӗсем фронтпа ҫӗршывӑн заказӗсене йӗркеллӗн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Куславкка комбиначӗн коллективӗ май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫласа пырать. Коллектив март уйӑхӗнчи заданине срокчен 110 процент пурнӑҫланӑ. Хитин, Шукст, Ольша юлташсем начальниксем пулса ӗҫлекен цехсем производство планне срокчен 5 кун малтан тултарнӑ. Стахановецсен йышӗ те ӳснӗ. Ҫавӑн пекех Кӳраньялӗнчи (Октябрьски район) «Труд» артель коллективӗ те май уявӗ умӗнхи ӑмӑртура ӗҫ тухӑҫлӑхне татах та ӳстерчӗ. Вӑл апрель уйӑхӗн планне срокчен 7 кун малтан пурнӑҫлама обязательство илнӗ. Ку артель темиҫе уйӑх ӗнтӗ Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне хӑйӗн аллинче тытса тӑрать. Кун пек примерсем татах та нумай.

Республика промышленноҫӗ пӗрремӗш кварталта продукци туса кӑларассине нумай вӑйлатрӗ. Производство программине уйӑхран уйӑхах ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырса, Верховный Главнокомандованин фондне темиҫе ҫӗр пин тенкӗлӗх продукци пачӗ.

Пирӗн колхозлӑ ял та ҫак кунсенче уйрӑмах хӗрӳллӗн ӗҫлет. Малта пыракан темиҫе ҫӗр колхоз ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе ҫитрӗ. Кашни районрах ҫитмен вӑрлӑха вырӑнтах тупас ӗҫе организацилерӗҫ. Республикӑри колхозсемпе колхозниксем иртнӗ ҫул вӑйлӑ тыррпул туса илнӗшӗн тӑван республикӑна панӑ Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне кӑҫал та хамӑр кӑларах хӑварассишӗн мӗнпур вӑйне кӗрешеҫҫӗ.

Анчах та халӗхи вӑхӑт тунӑ ҫитӗнӳсене [illegible] лармалли вӑхӑт мар. Сталин юлташ совет ӗҫҫыннисене кун ирнеки ӑлаках асӑрхаттарса тӑрать. Ҫак историлле кунсенче мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар совет ҫӗрне тасатса пынӑ вӑхӑтра, тылри ӗҫҫыннисен фронта пулӑшасса тата ытларах [illegible] тивӗҫ.

Промышленноҫпа транспорт работникӗсен кашнинех ӑмӑртура илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫласа кӗрешмелле. Республикӑри [illegible] производство планне [illegible] мобилизацилесе, мӗнпур ресурсне усӑ курса ӗҫлесе, фронт валли питех те кирлӗ продукци [illegible] ирттерсе тата срокчен туса кӑлармалла. Ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗр вӗҫӗмсӗр ӳстерсе пымалла. Ку тӗлӗшпе поточнӑй меслетпе ӗҫлессине вӑйлӑн сарса ямалла. Пӗр сӑмахпа каласан, ҫак аслӑ уяв умӗнхи ӑмӑртура производствӑра чаплӑ ҫитӗнӳсем тумалли майсемпе пурнне те туллин усӑ курас пулать.

Анчах Водосвет (директорӗ Варфоломеев) тата Атӑл леш енчи электростанци коллективӗсем Шупашкар хулинчи предприятисене сутӑпа энерги ҫителӗксӗр парса тӑраҫҫӗ-ха. Ҫавӑн пекех Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялавлӗ заводпа Канашри вагонсем юсакан завод та продукци кӑларассине чакарчӗҫ. Асӑннӑ заводсен руководителӗсен, завод ӗҫне лайӑхлатассишӗн татӑклӑ мерӑсем йышӑнса, апрель уйӑхӗнчи программӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнисӗр пуҫне, иртнӗ уйӑхсенче кӑларса ҫитерейме҅н продукцие те туса кӑларас пулать.

Транспорт работникӗсем умӗнче тӑракан задача вӑл — ҫуркуннехи шыв-шур вӑхӑтӗнче те чугун ҫула пӗр чӑрмавсӑр ӗҫлеттересси пулса тӑрать. Шывҫул транспорт работникӗсен кӑҫалхи навигацие пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илме тӑрӑшмалла.

Республикӑри заводсемпе фабрикӑсен коллективӗсенчен чылайӗшӗ тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем тумалли заданисене пурнӑҫлас тӗлӗшпе ҫӗршыв умӗнче парӑмлӑ-ха. Кӑҫалхи ҫул машинно-тракторнӑй станцисен хӑйсен ӗҫне никӑҫанхинчен те вӑйлатмалла.

Промышленность предприятийӗсен вӗсене запаслӑ пайсем ҫителӗклӗ таранах туса парса пулӑшас пулать.

Пур ӗҫе те кадрсем татса параҫҫӗ. Ҫавӑнпа кадрсем хатӗрлес пирки те ҫине тӑрса ӗҫлемелле.

Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртура куллен ҫитӗнӳсем тӑвакан предприятисемпе артельсене, ҫине тӑрса ӗҫлекен кашни патриотпа патриоткӑна пурте пӗлсе тӑмалла тӑвас пулать. Ку тӗлӗшпе партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен уйрӑмах тимлӗн ӗҫлеме тивет. Районсемпе хуласенче тухса тӑракан хаҫатсен май уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту мӗнле сарӑлса пынине анлӑн ҫутатса тӑмалла.

Май уявне промышленноҫра та, транспортра та, ялхуҫалӑхӗнче те ҫӗнӗ те чаплӑ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илессишӗн кӗрешер!

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Г. М. Никитин юлташа Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссарне уйӑрса лартасси ҫинчен

Георгий Михайлович Никитин юлташа Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗ.

ВЛКСМ Центральный Комитетӗнче

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ, комсомолӑн облаҫсемпе районсенчи тата пуҫламӑш организацийӗсен 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене шӑхса пухса, Чӑваш республикинчи комсомол организацийӗ 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене активлӑн хутшӑнса ӗҫленине палӑртнӑ.

Комсомолӑн Вӑрнар районӗнчи организацине ВЛКСМ Центральный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне памалла тунӑ.

Комсомолӑн Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича» колхозри пуҫламӑш организацине тата Елчӗкри машинно-тракторнӑй станцинчи пуҫламӑш организацине ВЛКСМ Центральный Комитечӗн хисеплӗ грамотине памалла тунӑ.

Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсемпе савӑнса

СӖНТӖР. «Хӗрлӗ Ҫар воинӗсен тавне тивӗҫлӗ пулар»,—ҫакӑн пек шухӑш-кӑмӑлпа ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ халӗ рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем. Вӗсем мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар хамӑрӑн государство чиккине тухнине производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе саламлаҫҫӗ. Колхозсемпе предприятисенче пулса иртекен митингсенче рабочисемпе колхозниксем хайсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Райпромкомбинатра пулса иртнӗ митингра Кузьмин, Колесников тата ытти юлташсем тухса каларӗҫ. Вӗсем, Хӗрлӗ Ҫара чӗререн тав туса, нормӑна 150 процентран кая мар тултарса пыма сӑмах пачӗҫ.

МТС-ра та рабочисемпе служащисен митингӗ пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Тракторнӑй бригадӑн бригадирӗ Марынкин юлташ Хӗрлӗ Ҫар тунӑ ҫӗнтерӳсене ялхуҫалӑх машинисене срокчен юсаса пӗтернипе, ҫуракине кӗске срокра та пысӑк пахалӑхпа ирттернипе ответлесси ҫинчен пӗлтерчӗ. МТС-ра ӗҫлекенсем, Марынкин юлташӑн сӑмахне ырласа, хайсем ҫине обязательствӑсем илчӗҫ.

Колхозсенче пулса иртекен митингсемпе пухусенче колхозниксемпе колхозницӑсем ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерес тӗлӗшпе татӑклӑ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Кӑҫалхи мартӑн 4-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче нимӗҫсем тӳснӗ ҫухатусем тата Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем тытса илнӗ трофейӑсем

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, Совет Союзӗн Маршалӗ ЖУКОВ командир пулса ертсе пынипе, мартӑн 4-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче наступлени туса пырса, нимӗҫ захватчикӗсенчен 41.940 тӑваткӑл километр Совет территорине, Украинӑн 3 область центрне—ВИННИЦА, КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК, ЧЕРНОВИЦЫ хулисене — тата 57 хулана, 11 чугун ҫул узелне, халӑх пурӑнакан 647 пысӑк пункта тата халӑх пурӑнакан ытти 3.801 пункта ирӗке кӑларнӑ.

Наступление вӑйлатса пырса, фронт ҫарӗсем Карпат тӑвӗсем умне пырса тухнӑ, нимӗҫсен фронтне икӗ пая татса пӑрахнӑ. Ҫапла вара нимӗҫсен фрончӗн тӗп ҫулйӗрӗсем пӗтнӗ, ҫавӑнпа та тӑшманӑн кӑнтӑрти группировки халӗ Румыни урлӑ пыракан ҫулсемпе ҫеҫ усӑ курма пултарать. Ҫак наступлени вӑхӑтӗнче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн ҫак соединенийӗсемпе чаҫӗсене аркатса тӑкнӑ е йывӑр ҫухатусем кӳнӗ: 96-мӗш, 208-мӗш, 254-мӗш, 291-мӗш, 340-мӗш, 371-мӗш, 183-мӗш, 217-мӗш, 339-мӗш, 68-мӗш, 357-мӗш, 359-мӗш, 361-мӗш пехотнӑй дивизисене, Польша генерал-губернаторствинчи дивизи ушкӑнне, ПРЮТЦМАНӐН дивизи ушкӑнне, ШААЛЬАН дивизи ушкӑнне, 454-мӗш охраннӑй дивизие, 101-мӗш горно-стрелковӑй дивизие, эсэсовецсен 44-мӗш ГАЛИЦИ дивизине, 1-мӗш, 6-мӗш, 7-мӗш, 8-мӗш, 11-мӗш, 16-мӗш, 17-мӗш, 19-мӗш, 25-мӗш танковӑй дивизисене, эсэсовецсен «Райх» тата «Адольф Гитлер» ятлӑ танковӑй дивизийӗсене, РАДОВИЦӐН танковӑй ушкӑнне, ГУДЕЛИУСӐН танковӑй ушкӑнне, нимӗҫсен 20-мӗш мотодивизине тата румынсен 8-мӗш пехотнӑй дивизине.

Фронтӑн ударлӑ ҫарӗсем ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пынипе СКАЛА хули районӗнче нимӗҫсен ҫичӗ пехотнӑй, ҫичӗ танковӑй тата пӗр моторизованнӑй дивизине ҫавӑрса илнӗ те халӗ вӗсен юлашкийӗсене пӗтерсе пыраҫҫӗ.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем мартӑн 4-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче туса ирттернӗ операцисенче тӑшмана ҫакӑн пек ҫухатусем кӳнӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—1.338, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—2.516, миномётсем—1.285, пулеметсем—4.206, автомашинӑсемпе тягачсем—22.519, бронемашинӑсемпе бронетранспортерсем—572, самолётсем—272. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсен 183.310 вилли выртса юлнӑ.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем — 849, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 2.086, пулеметсем — 4.223, миномётсем — 1.391, винтовкӑсемпе автоматсем — 38.020, автомашинӑсем—31.468, бронемашинӑсемпе бронетранспортерсем — 466, паровозсем—149, вагонсем—6.315, мотоциклсем—1.944, радиостанцисем—203, снарядсем—7.634 пин, тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗн склачӗсем—436, лашасем—4.528. 24.950 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, ҫак операцисем вӑхӑтӗнче нимӗҫсем хӑйсен ҫар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе ҫынкисене ҫакӑн чухлӗ ҫухатнӑ: вилнисемпе тыткӑна лекнисем—208.260 ҫын, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—2.187, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—4.602, миномётсем—2.676, пулеметсем—8.429, автомашинӑсемпе тягачсем—53.987, бронемашинӑсемпе бронетранспортерсем—978.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 3-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 3-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ДУБНО хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшманпа ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ, Волынь облаҫӗнчи район центрӗсене — ГОРОХОВ хулипе БЕРЕСТЕЧКО хулине, Львов облаҫӗнчи ЛОПАТИН район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 80 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ОЛЬХУВКА, ЗВИНЯЧЕ, СКОБЕЛКА, ХОЛОНЮВ, БОРЕМЕЛЬ, ПЕРЕМЫЛ, БАРЫЛУВ, СМАЖУВ, ЩУРОВИЦЕ, ЗАВИДЧЕ, КУЛИКУВ, НЕМИЛУВ, СТАНИСЛАВЧИК, ПАНИКОВИЦА, БОРАТЫН, ПОНИКВА ятлӑ пысӑк ялсем.

Темиҫе кун каярах УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем чылай участокра Прут шывӗ урлӑ каҫнӑ та РУМЫНИ территорийӗ ҫинче халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—КРАСНА ЛЕУКА, ШЕРПЕНИЦА, СЭВЕНИ, ХЕНЕШТИ, ДЕНЖЕНИЙ, СТЕФАНЕШТИ, КАУЕШТИ, ТРИФЕШТИ, ЦИГАНЕШИУ, КЫРПИЦЫЙ (Яссы хулинчен 13 километр ҫурҫӗртерехре) ятлӑ пысӑк ялсем тата ДЕНЖЕНИЙ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ. Ҫапла пирӗн ҫарсем ЯССЫ хулипе ДОРОХОЙ хули хушшинчи чугун ҫула татнӑ.

КИШИНЕВ хули енче пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, темиҫе ял туртса илнӗ. Вӑл шутра — ГОРДИНЕШТИ, МЕЛЕШЕНЬ, БРАВИЧА, КУКУРУЗЕНИ, КУРЛЕНИ, ЛАЛОВА, СТОДОЛНА, САМАРКА ятлӑ пысӑк ялсем.

ОДЕССА енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступление вӑйлатса пынӑ, Одесса облаҫӗнчи КРАСНЫЕ ОКНА, ВАЛЕГОЦУЛОВО, ЖОВТЕНЬ район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — МАЛАЕШТЫ, НОВО-САМАРКА, АНТОНОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, НОВОЕ ЗАРИЦКОЕ, БИРНОСОВО, ОНИЛОВО, БРАНКОВАНОВО, КОЧУЛОВА, АРМАШОВКА, СЕМЕНОПОЛЬ, СТАЛИНО, ЦЕЗАРЕВКА ятлӑ пысӑк ялсем тата МОРДАРОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Апрелӗн 2-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗн пур фронтсенче нимӗҫсен 52 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 40 самолетне персе ӳкернӗ

☆ ☆ ☆

Дубно хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, Волынь облаҫӗнчи район центрӗсене—Горохов хулипе Берестечко хулине тата Львов облаҫӗнчи Лопатин район центрне туртса илнӗ. Ҫав пунктсемшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Тулли мар даннӑйсем тӑрӑх, 1.500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 34 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Нимӗҫсенчен 9 бронемашинӑпа бронетранспортер, 26 тупӑ, 80 пулемет, боеприпаспа ҫар пурлӑхӗн склачӗсем тытса илнӗ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем Скала хули районӗнче ҫавӑрса илнӗ нимӗҫ ҫарӗсене пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ. «Хурантан» хӗсӗнсе тухма хӑтланса, тӑшман пӗтӗм чун-хавалӗпе ҫапӑҫать. Анчах та ӑна пур тӗлте те совет ҫарӗсен ҫӗнтерме ҫук речӗсем хупӑрласа тӑраҫҫӗ. Нимӗҫсен колоннисем кӑнтӑралла, Днестр шывӗ патнелле татса тухма хӑтланнӑ. Совет пехотинецӗсем, артиллерисчӗсем, миномётчикӗсем тата танкисчӗсем тӑшмана тӑвӑллӑн персе ҫунтарма тытӑннӑ. Тӑшман хӗвеланӑҫ еннелле татса тухма хӑтланнисене те пӗтерсе лартнӑ. Ҫавӑрса илнӗ ункӑ хӗстерсе пырса, пирӗн чаҫсем кун каҫиччен 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Гитлеровецсем ҫапӑҫу хирне темӗн чухлӗ хӗҫпӑшал тата ҫар техники пӑрахса хӑварнӑ. Пӗр участокра кӑна тӑшманӑн 1.200 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, 1000 автомашина ытла тытса илнӗ. Тепӗр районра совет ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан нимӗҫсем сирпӗнтерсе янӑ 40 танк тата ҫунтарса янӑ 2.000 автомашина ытла пӑрахса хӑварнӑ. Совет танкисчӗсем тӑшмана уйрӑмах йывӑр ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Нимӗҫсен ҫапӑҫури речӗсем хушшине ҫӗмӗре-ҫӗмӗре кӗрсе кайса, танкистсем нимӗҫсене темиҫе ушкӑна уйӑрса яраҫҫӗ те вара ҫавӑрса илнӗ нимӗҫ дивизийӗсен юлашкийӗсене пайӑн-пайӑн пӗтерсе пыраҫҫӗ.

Совет боецӗсемпе офицерӗсем шыв-шур вӑхӑтӗнче ҫулсем пӑсӑлса кайнӑ условисенче кӗрешеҫҫӗ, питӗ пысӑк геройлӑх кӑтартаҫҫӗ, хӑйсене хӑйсем хӗрхенмесӗр ҫапӑҫаҫҫӗ. Головкин юлташ ертсе пыракан красноармеецсен пӗр пӗчӗк ушкӑнӗ нимӗҫсем тытса тӑракан чугун ҫул станцине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Тӑшман вӗсенчен нумай йышлӑрах пулнӑ пулин те, совет боецӗсем нимӗҫсемпе ҫапӑҫма пуҫланӑ. Вӗсем гитлеровецсене нумайӗшне вӗлерсе тӑкнӑ, ҫавна кура ыттисем вара тарса ҫухалнӑ. 8 тупӑ, 6 вагон тата 45 тягачпа автомашина тытса илнӗ. Тепӗр участокра каялла чакакан нимӗҫсем шыв урлӑ каҫнӑ та шыв ҫинчи кӗпере вут тӗртсе янӑ. Шывӑн леш енче темиҫе гитлеровец юлнӑ та пулеметпа персе пирӗн боецсене ҫав пушара сӳнтерме паман. Автоматчиксем Караевпа Бундец юлташсем шыв урлӑ ишсе каҫнӑ та нимӗҫ пулеметчикӗсене вӗлерсе пӗтернӗ. Вара пирӗн боецсем пушара часах сӳнтерсе лартнӑ та кӗпер урлӑ шывӑн леш енне каҫса кайнӑ. Гварди старши лейтенанчӗ Кульдин ертсе пыракан танк экипажӗ юлашки ҫапӑҫусенче 60 гитлеровеца вӗлернӗ, нимӗҫсен 4 танкне, боеприпас турттарса пыракан 60 автомашинипе лавне пӗтерсе тӑкнӑ. Гварди лейтенанчӗ Веревкин ертсе пыракан танк экипажӗ нимӗҫсен 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата тӑшманӑн 30 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Одесса енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Тӑшман, оборона тума лайӑх позицисемпе усӑ курса, хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Совет чаҫӗсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла йышӑннӑ. Пӗр соединени боецӗсем Большой Куяльник шывӗ урлӑ каҫнӑ та, тӗрлӗ енчен ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, Одесса облаҫӗнчи Жовтень район центрне туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман виллисем нумай выртса юлнӑ. Пирӗннисем трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Пӗр часри подразделенисем, ҫавӑрса илмелли ӑста маневр туса, нимӗҫсен икӗ батальонне аркатса тӑкнӑ, вӗсен пӗтӗм хӗҫпӑшалне тытса илнӗ. Пирӗн тепӗр часть пӗр яла туртса илнӗ чухне 24 тупӑ, 40 автомашина тата пысӑк боеприпас склачӗ тытса илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн разведка тӑвакан авиацийӗн летчикӗсем Финн заливӗнче тӑшман карапӗсен икӗ ушкӑнне асӑрханӑ. Флот авиацийӗ кун каҫиччен тӑшман судисене виҫӗ хутчен вӑйлӑн пырса ҫапнӑ. Карапсем ҫинчи зенитнӑй артиллери вӑйлӑ персе тӑнӑ пулин те тата тӑшманӑн истребителӗсем хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫнӑ пулин те, пирӗн самолетсем пурте карапсем тӗлне вӗҫсе тухнӑ. Пӑрахнӑ бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе тӑшманӑн 2 тральщикӗ, хуралта ҫӳрекен 2 катерӗ тата десант антармалли пӗр баржи шыва путнӑ. Сывлӑшра пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусенче совет летчикӗсем нимӗҫсен 35 самолетне персе ӳкернӗ. Пирӗн 4 самолет пӗтнӗ.

Ҫурҫӗр флочӗн авиацийӗ Киркенесри портне (Петсамо заливӗнче) тапӑннӑ. Совет штурмовикӗсен ушкӑнӗ, истребительсем хӳтӗлесе пынипе, тӑшманӑн портра тӑнӑ транспотне пырса ҫапнӑ. Пӑрахнӑ бомбӑсем пырса тивнипе нимӗҫсен 3.000 тонна таякан судни шыва путнӑ, тӑшманӑн тепӗр суднине вӑйлӑ сиенленӗ.

* * *

Мартӑн 27-мӗшӗнче Крымри партизансем тӑшманӑн Старый Крым хулинчи гарнизонне аркатса тӑкнӑ. Хула урамӗсенче пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусенче совет патриочӗсем 200 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Боеприпаспа хӗҫпӑшал склачӗсене, комендатурӑпа хула полицийӗн суртне сирпӗнтерсе, ҫунтарса янӑ. Совет патриочӗсем трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Партизансем нимӗҫсен тӗрме хуралне вӗлерсе тӑкнӑ та тӗрмери 46 совет гражданне ирӗке кӑларнӑ.

Пулӑ тытакан колхозсен ӗҫне вӑйлатмалла

Ҫӗнӗ ҫул умӗн республикӑри пулӑ тытакан колхозсем, 1-мӗш кварталти пулӑ тытмалли плана срокчен тултарма пулса, хӑйсем ҫине обязательствӑсем илнӗччӗ. Ҫак обязательствӑсене вӗсем тимлӗн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Пӑрачкав районӗнчи Папанин ячӗпе тӑракан колхоз, Сӗнтӗрвӑрринчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз, Етӗрнери пулӑ тытакан колхоз тата ытти те хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫларӗҫ. Асӑннӑ колхозсем пулӑ тытас ӗҫ хальхи вӑхӑтра питӗ кирлӗ ӗҫ пулса тӑнине тӗплӗн ӑнланса илнӗ. Колхоз руководителӗсем ҫак ӗҫе лайӑх ертсе пыраҫҫӗ. Пулӑ тытакан колхозниксемпе колхозницӑсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем хушшинче агитациллӗ-ӑнлантаруллӑ ӗҫе те тӑтӑшах туса пыраҫҫӗ.

Анчах та пулӑ тытас ӗҫ пур колхозсенче те лайӑх пулса пымасть-ха. Кувакино, Улатӑр районӗсенчи пулӑ тытакан колхозсем хӑйсен обязательствисене пурнӑҫа кӗртеймерӗҫ. Пулӑ тытакансен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пачар. Колхозсен руководителӗсем пулӑ тытас ӗҫе вӑйлатассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

Пулӑ тытас ӗҫри йывӑрлӑхсене сирсе яма пӗлмелле. Пулӑ тытмалли плана пурнӑҫлассишӗн мӗнпур майсемпе усӑ курса ӗҫлемелле.

Фронтпа ҫӗршыв пирӗнтен ытларах та ытларах апат-ҫимӗҫ ыйтаҫҫӗ. Пулӑ вӑл—чи паха апат-ҫимӗҫсенчен пӗри. Ҫавӑнпа та пулӑ тытакан пур колхозсен те пулӑ тытассине вӑйлатмалла.

В. МАКАРОВ.
Чӑваш АССР-чи Рыбтрест управляющийӗ.

Май уявӗ умӗнхи ӑмӑрту

Производствӑри ҫитӗнӳсем

КУСЛАВККА. (Хамӑр корр.). Комбинат коллективӗ мартпа апрель уйӑхӗсенчи производство планне срокчен 5 кун малтан пурнӑҫлама, ӗҫ тухӑҫлӑхне ытти уйӑхринчен 10 процент чухлӗ ӳстерме, государство заданине пур ассортиментсемпе те тултарма обязательство илнӗччӗ.

Рабочисемпе работницӑсем хӑйсен сӑмахне чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Коллектив март уйӑхӗнчи производство планне 110 процент пурнӑҫларӗ. Уйрӑмах Хитин, Ольша юлташсем начальниксем пулса ӗҫлекен цехсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Март уйӑхӗнчен комбинатра комсомолецсемпе ҫамрӑксен 54 фронтовой бригади пулнӑ пулсан, халӗ 70 бригадӑна ҫитрӗ. Бригадӑри ҫынсем кашниех ӗҫ нормине 150—200 процент тултараҫҫӗ.

* * *

Шупашкарти эрех завочӗн коллективӗ май уявне производствӑри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илет. Коллектив кӑҫалхи пӗррремӗш кварталти задание 124 процент, март уйӑхӗнчи плана 264,2 процент пурнӑҫларӗ. Рабочисемпе работницӑсем апрель уйӑхӗнче татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлессишӗн хӑйсем ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илчӗҫ.

* * *

КАНАШ. Катекри кирпӗч завочӗнчи рабочисемпе работницӑсем, Хӗрлӗ Ҫар совет государствин чиккине тухнӑ ятпа Сталин юлташ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене панӑ приказа вуланӑ хыҫҫӑн татах паттӑртарах ӗҫлеме пулчӗҫ. Ҫак кунсенче кунти рабочисемпе работницӑсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерни уйрӑмах палӑрать. Паллӑ стахановецсем И. Марфин, П. Павлов, П. Петров, С. Яковлев юлташсем ӗҫ нормине кулленех 200—250 процент тултараҫҫӗ.

Завод коллективӗ март уйӑхӗнчи задание 134 процент пурнӑҫларӗ. Тӑмран чашӑк-тирӗк тӑвакан цех март уйӑхӗнчи задание 179 процент пурнӑҫланӑ.

Халь, май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, кашни рабочипе работница ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса ӗҫлет.

М. И. Калинин юлташа вӑл совет влаҫӗн Верховный органӗн руководителӗ пулса ӗҫлеме тытӑнни 25 ҫул тултарнӑ ятпа янӑ саламсем

М. И. Калинин юлташ совет влаҫӗн Верховный органӗн руководителӗ пулса ӗҫлеме тытӑнни 25 ҫул тултарнӑ ятпа саламлӑ телеграммӑсем нумай илнӗ. Ҫав телеграммӑсене ҫак организацисемпе уйрӑм ҫынсем янӑ:

Грузи ССР-ӗнчи Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ тата Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, Казахстанри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ тата Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, Узбекистан Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ, Киргизи Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ, Армян ССР-ӗн Верховный Совет Президиумӗ, Карело-Финн ССР-ӗн Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ, Эстони ССР-ӗнчи Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, Латвири Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ, Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ, Якут АССР Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ, Тутар АССР Верховный Совет Президиумӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ, Пушкӑрт АССР Верховный Совет Президиумӗпе ВКП(б) Обкомӗ, Мордва АССР Верховный Совет Президиумӗ, Ӗҫҫынни депутачӗсен Свердловск область Совечӗн 3-мӗш сессийӗ, Ставрополь крайӗн ВКП(б) Комитечӗпе ӗҫҫынни депутачӗсен край совечӗн исполкомӗ, ВКП(б) Калинин Обкомӗ, ВКП(б) Ростов Обкомӗ, ВКП(б) Куйбышев Обкомӗпе ӗҫҫынни депутачӗсен область совечӗ, ВКП(б) Краснодар крайкомӗпе крайсовет исполкомӗ, ВКП(б) Иваново Обкомӗпе область исполкомӗн совечӗ, фабрикӑсемпе заводсен, чугун ҫул транспорчӗн коллективӗсем, ҫар чаҫӗсемпе ҫар организацийӗсем, халӑх комиссариачӗсем, профсоюз организацийӗсем, аслӑ шкулсем, театрсем, академиксем, ученӑйсем, писательсем, артистсем, художниксем тата ыттисем те.

Вӗсемсӗр пуҫне, Калинин юлташ Монгол Халӑх республикин Кӗҫӗн Хурал президиумӗнчен, Монгол Халӑх Республикин премьер-министрӗнчен Чойбалсан Маршалтан, Тувин Халӑх Республикин Кӗҫӗн Хуралӗн 6-мӗш сессийӗнчен саламсем илнӗ. (ТАСС).

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăра çирĕп тытса тăрассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

Ÿкерчĕкре: Шăхасан районĕнчи «Калов» ячĕпе тăракан колхозри выльăх-чĕрлĕх ферми заведующийĕ П. Пиглов юлташ. Вăл ертсе пыракан фермăсем [illegible] плана майраклă шултăра выльăхсем енĕпе 133.3 процент, сыснасем енĕпе —168 процент, сурăхсем енĕпе — 148,3 процент пурнăçланă.

Н. Ф. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Хĕрлĕ Ялав татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнет

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 4-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш хут пани районри колхозниксемпе колхозницăсене чĕререн хаваслантарчĕ. Çак хисеплĕ наградăна панине вĕсем фронта пулăшас тĕлĕшпе тата вăйлăрах ĕçленипе ответлеме тупа тăваççĕ.

«Коминтерн» колхоз членĕсем—70 çулхи колхозник-стахановец Сидоров тата Афанасьевпа Федоров, çак хисеплĕ наградăна панишĕн савăнса пухура çапла каларĕç:

— Эпир çуракине хатĕрленнĕ чухне çÿре туртисем, хăмăт-пăявĕсем юсарăмăр. Вăтă пулин те, хамăрăн фронтри ывăлсенчен юлас килмест. Çитес çуракине лайăх ирттерме мĕнпур вăя шеллемĕпĕр. Çавăн пекех тырă вырнă, авăн çапнă чухне те ырми-канми ĕçлеме сăмах паратпăр.

Колхозăн малтанхи вăхăтра çĕрулми вăрлăхĕ çитмен. Ăна вĕсем «Большевик» завода кайса тупнă. Çак кунсенчех колхозниксем çав завода кайса 2 тонна çĕрулми тăрри касса хатĕрлеççĕ.

Çавăн пекех «Красное Сормово» колхоз тимĕрçи А. Филиппов юлташ, колхозăн пĕтĕм çĕр лаптăкне акса хăварас кăмăлпа, хăйĕн перекетленĕ тупăшĕнчен колхоза 100 пăт тырă вăрлăхлăх кивçен панă.

Районри колхозниксем çак кунсенчех колхозсене 780 пăт тырă, 125 центнер çĕрулми. 112 центнер кантăр вăрри кивçен панă. Кунсăр пуçне, Шăмăршă районне 250 центнер вăрлăх парса пулăшнă. «Исаково» колхоз членĕ Мария Владимирова — 21 пăт, Отечественнăй вăрçă инваличĕ Андрей Афанасьев — 6 пăт, Танăшъел сынни Владимир Николаев «Новое дело» колхоза 30 пăт тырă вăрлăхлăх кивçен панă.

С. ШАДИН.

«Гигант» совхоз ир акакан пучахлă тырăсене акса пĕтерне

«Гигант» совхоз (Ростов облаçĕ) мартăн 31-мĕшĕнче — 5 кун хушшинче — пучахлă культурăсене акса пĕтерне. Акнă лаптăкăн 80 процентне тулă йышăнса тăрать. Акасса лайăх йышши сортлă вăрлăх акнă, питĕ лайăх акнă.

Совхоз 14.000 гектар çине ирхи çĕртме тума тытăнать, çак лаптăк вăл вăрçăччен хи çĕртме лаптăкĕнчен икĕ хут ытларах. (ТАСС).

Кăсал иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлĕпĕр

1943 çулта вăйр ялхуçалăх ĕçĕсене 1942 çулхинчен лайăхрах ĕçлерĕмĕр. Сураккине тата тырăсене пуçтарса кĕртес ĕçе те вăхăтра туса ирттертĕмĕр. Тырăсене вăхăтра çапса пуçтарнă, сентябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă. Унсăр пуçне пирĕн районри колхозсемпе колхозниксем государствăна 150.000 пăт тырă сутрĕç. Пирĕн МТС çулталăкри ĕç планне 101 процент пурнăçларĕ. Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та анăçлăн пурнăçланă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 360 пуç продуктивлă выльăх ярса патăмăр.

Пирĕн районри колхозсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш хут илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Сураки çывхарса çитрĕ. Çак вăхăт — 1944 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçĕн те ответлă тапхăрĕ пулса тăрать.

Уйри ĕçсене пуçăнма мĕнле хатĕрленнĕ-ха эпир?

Тракторсене юсассине ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр, вĕсене ĕçе лайăх пĕлекен тракторристсен аллине патăмăр. Горючи, газогенераторлă тракторсем валли—чуркăсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Пирĕн районри колхозсем лайăх пахалăхлă вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлерĕç.

Лашасем çуракине вăйлă тухаççĕ. Плугсене, сеялкăсене, çÿресене пур колхозсенче те юсаса хатĕрленĕ.

Пирĕн колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те аван ĕçлерĕç. Хĕллехи вăхăтра уя тислĕк кăлармалли плана 127 процент пурнăçланă. «Первое мая», «Самолет» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем уя тислĕк 2 хут ытларах кăларнă. Çĕнĕ Яххакассинчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз кайăк-кĕшĕк комбинатĕнчен 1290 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата Вăрнар поселокĕнчен 800 лав тислĕк турттарчĕ. Районри колхозсем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана та чылай ирттерсе тултарнă.

Кашни колхозра ĕç планне тунă, çураки вăхăтĕнчи агротехникăллă мероприятисен планне тата ĕç нормисене те çирĕпелтĕр. Юлса пыракан хăшпĕр колхозсен бригадисене, звеносене пулăшма унти ĕç дисциплинине çирĕплетме тытăнатпăр. МТС-ри механизаторсен кадрсене, колхоз председателĕсене, бригадирсене тата звеноводсене курссенче вĕрентсе кăлартăмăр.

Колхозсем, бригадăсем тата звеносем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине 1944 çулта вăтамран кашни гектартан 100 пăт тырă туса илес задача лартрĕç. Çав задача пысăк та ответлă. Ăна пурнăçлама пулать тата пурнăçламалла та.

Акасса эпир таса та лаха вăрлăхпа, [illegible] акатпăр. Иртнĕ çул эпир кĕрхи сĕртме планне 100 процентчен пурнăçларăмăр. [illegible] сем йăлтах сураккине хатĕрленес ĕçре пирĕншĕн тĕп ыйтусем пулса тăрассĕ.

Тырăсене машинăпа акса хăварасси пирĕншĕн çĕнĕ ĕç мар. Анчах иртнĕ çул уйрăм колхозсенче сеялкăсемпе туллин усă курман тĕслĕхсем те пулчĕç. Кăçал лаша кÿлсе тата тракторсенчен кăкарса акмалли сеялкăсемпе туллин усă курмалла. Кашни колхозăннах яровизациленĕ вăрлăх акмалла.

Сураки вăхăтĕнчех кĕрхи тырăсене пăхас пирки те ĕçлемелле. Эпир кăçал районĕпе 8.000 гектар çинчи кĕрхи тырăсене апат пама тата 5.000 гектар çинчи ыраш калчисене тепĕр хут сÿреме шутлатпăр.

Пирĕн республикăна 1943 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премии пани колхозниксемпе колхозницăсене тата ялхуçалăхĕнчи пур работниксемпе специалистсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума хушать. Пирĕн колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ. тата ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илме пур майсем те пур, эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илĕпĕр те.

П. ОСИПОВ,
Вăрнар райсовет исполкомĕн председателĕ.

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕМ АПРЕЛĔН 1-МĔШЕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИНЕ МĔНЛЕ ХАТĔРЛЕННИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Тĕштырă вăрлăхĕ хывни	Вăрлăх тасатни	[illegible]	Çĕрулми вăрлăхне хатĕрлени	Тислĕк кăларни
Улатăр	90,7	52,7	23,8	49,8	57,5
Элĕк	93,5	100,0	70,8	93,6	75,2
Патăрьел	101,9	100,0	10,9	87,7	93,1
Йĕпреç	98,0	74,9	59,9	77,6	32,1
Ишлей	91,6	100,0	79,0	99,0	59,7
Калинино	93,6	100,0	38,8	86,4	61,6
Канаш	91,2	100,0	51,2	63,7	62,9
Куславкка	93,4	100,0	34,7	100,0	49,7
Комсомольски	93,7	100,0	28,1	53,4	75,5
Красноармейски	[illegible]	100,0	[illegible]	[illegible]	[illegible]
Хĕрлĕ Чутай	92,6	100,0	59,2	76,2	53,0
Кувакино	73,2	63,6	5,0	23,3	51,6
Сĕнтĕрвăрри	104,8	100,0	36,9	97,0	60,6
Муркаш	94,8	100,0	50,6	92,1	23,5
Октябрьски	90,8	100,0	41,6	96,4	65,0
Первомайски	86,2	100,0	4,1	56,4	49,0
Пăрачкав	72,6	90,4	8,3	48,5	34,4
Советски	94,7	77,5	45,8	99,1	47,6
Сĕнтĕр	95,6	95,6	86,7	91,4	82,5
Вăрмар	104,9	100,0	31,4	106,2	60,1
Çĕрпÿ	113,7	100,0	25,7	92,9	70,0
Шупашкар	95,6	100,0	20,8	100,6	50,7
Чкаловски	88,9	100,0	—	32,0	52,8
Чурачăк	92,4	100,0	14,8	96,3	27,1
Шăмăршă	55,9	65,1	1,3	17,8	30,0
Шăхасан	109,4	100,0	18,8	58,8	58,4
Çĕмĕрле	78,4	98,1	65,2	56,0	73,5
Етĕрне	91,6	100,0	45,0	105,3	74,3
Елчĕк	100,5	100,0	21,7	50,3	67,8
Тăвай	95,5	100,0	35,1	77,5	50,7
Шупашкар хули	145,2	100,0	133,3	124,7	76,8

КОЛХОЗСЕН вăрлăх фондне

ÇАК КОЛХОЗНИКСЕМ—ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ÇУЛАМЛĂ ПАТРИОЧĔСЕМ—ХĂЙСЕН ЗАПАСĔСЕНЧЕН ХЫВНĂ

А. ФИЛИППОВ—Красноармейски районри «Красное Сормово» колхоз тимĕрçи —100 пăт тырă.

М. ГРИГОРЬЕВА—çав районри «Унга» колхозри колхозница—5 пăт тырă.

М. ВЛАДИМИРОВА—çав районри «Исаково» колхозри колхозница—21 пăт тырă.

А. АФАНАСЬЕВ—çав колхозăн членĕ, Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ —6 пăт тырă.

В. НИКОЛАЕВ—çав районри Танăшъел сынни—30 пăт тырă.

А. ИБЕТОВ—Чкаловски районри Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозри колхозник—30 пăт çĕрулми.

И. АЛЕКСЕЕВ—çав колхозри колхозник —4 пăт çĕрулми.

В. ДУМИЛИН—çав колхозри колхозник —2 пăт çĕрулми.

А. ПАЙМУКОВ—çав колхозри колхозник —2 пăт çĕрулми.

И. КРАСНОВ—çав колхозри колхозник —2 пăт çĕрулми.

С. ИГНАТЬЕВА—çав колхозри колхозница—2 пăт тырă.

Е. ОВЧЕНКОВ—Кувакино районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхозри колхозник—2 пăт çĕрулми.

С. БОРИСОВ—çав колхозри колхозник —2 пăт çĕрулми.

А. ЮГАНОВА—çав колхозри доярка—2 пăт çĕрулми

А. ЛОГИНОВ—çав колхозри полевод—2 пăт çĕрулми.

Тăшмана çĕнтерме хĕрÿ ĕçпе пулăшар

Пирĕн районри колхозсем иртнĕ çул вăтам шутпа кашни гектартан 13,2 центнер тĕштырă, 110 центнер çĕрулми туса илчĕç. Уйрăм колхозсем татах та пысăкрах тухăçлă тырă туса илчĕç. Заводской ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнер тĕштырă, 1000 пăт çĕрулми пухрĕç. «Осоавиахим» колхоз гектартан вăтам шутпа 19 центнер тĕштырă туса илчĕ. Тухăçлă тырă пухса илсе, колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçларĕç, колхозниксем хăйсен запасĕнчен государствăна 124.000 пăт тырă сутрĕç.

Пирĕн республикăри колхозниксем, уйхирсенче тăрăшса ĕçлесе, пысăк тухăçлă тырпул туса илнине партипе правительство пысăк хака хучĕç. Чăваш республикине вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премии пачĕç. Çак чаплă наградăна пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсен тата МТС-ри работниксен ĕçри хастарлăхне çĕклерĕ. Çак хыпара илтнĕ хыççăн колхозсенче тата МТС-ра савăнăçлă митингсем пулса иртрĕç. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем 1944 çулта татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илме пулчĕç. «Осоавиахим» колхоз членĕсен пуххăвĕнче ВКП(б) членĕн кандидачĕ, Отечественнăй аслă вăрçăн инваличĕ Хабаров юлташ çапла каларĕ:

— Правительствăн пысăк наградине ответлесе, кăçал татах та лайăхрах ĕçлĕпĕр. Иртнĕ çул эпир кашни гектартан 19 центнер тырă пухса илнĕ пулсан, кăçал татах та ытларах илĕпĕр.

Пухусенче тухса калакан колхозниксем хăйсен сăмахĕсенче вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тата Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăра çирĕппĕн тытса тăма хатĕррине пĕлтерчĕç. Районри колхозниксем 1944 çулта кашни гектартан 14 центнертан кая мар тĕштырă туса илме тата акмалли лаптăка ÿстерсе пыма обязательство илчĕç.

Колхозсен уйне 112.000 лав тислĕк кăларнă. Пиншер центнер кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата вырăнти ытти удобренисене те хатĕрленĕ. Колхозсенче халĕ плугсем, çÿресем, акмалли машинăсем пĕтĕмпех юсавлă, ут таврашĕсемпе тĕрлĕ инвентарьсене те юсаса лартнă. Пирĕн МТС çуракине иртнĕ çулхинчен лайăхрах хатĕрленчĕ. Тракторсен паркĕ акана тухма пур енчен те хатĕр.

Тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерсе пыма пирĕн пур условисем те пур. Çуракине вăхăтра та пахалăхлă ирттерме вăй та çителĕклĕ.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Рейтер агентстви Эрколи заявленийĕ çинчен

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хăйĕн Неапольри специальнăй корреспонденчĕ каланине çапла пĕлтерет: «Италири коммунистсен партийĕн [illegible] Италири ытти оппозициллĕ партисене [illegible] Итали король [illegible] Виктор — Эммануила вырăнтан [illegible] Коммунистсен партийĕ [illegible] Эрколи [illegible] Неаполе таврăннă. Хăйне хăвасла [illegible] Эрколи Италири коммунистсен [illegible] программине [illegible]: 1) фашизма хирĕç кĕрешекен [illegible] тумалла, 2) вăрçă пĕтнĕ хыççăн Италире государство [illegible], 3) нумай партисен представителĕсенчен Итали наци правительствине туса хумалла.

«Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре Италие мĕн вăйлăтать—эпир çавăншăн тăратпăр. Италие мĕн вăйсăрлатать—эпир çавна хирĕç тăратпăр,—тенĕ Эрколи.—[illegible]».

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: тăшман Анцио патĕнчи кĕпер умĕнчи укрепленисем çинче тăракан союзниксен çарĕсен сулахай флангне тапăнса пĕр пĕчĕк атака пуçласа янă, çав атакăна сирсе янă. Ытти фронтсенче лăпкă тăнă.

Ĕнер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен темиçе пысăк соединенийĕ Штейрти (Австри) шарикоподшипниксем туса кăларакан заводпа авиаци завочĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Мостарти (Югослави) аэродрома тапăннă. Союзниксен самолечĕсем çавăн пекех тата тăшманăн Италири чылай объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Кун кăсинчен тăшманăн 100 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 33 самолет пĕтнĕ. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри сывлăш-çар вăйĕсем 2.200 вĕçеве яхăн тунă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН МАРТ УЙĂХĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви паян Англи авиацийĕ март уйăхĕнче мĕн-мĕн туни çинчен калакан цифрăсем пичетлесе кăларнă. Уйăх хушшинче акăлчансен çĕрле кĕрешекен 8.000 ытла бомбардировщикĕ тăшман объекчĕсем çине 28.000 тонна бомба пăрахнă. Çĕрле март уйăхĕнчи пек нумай бомба урăх нихăш уйăхра та пăрахни пулман. Германи территорине тапăнса 6.000 бомбардировщик ытла çапăçнă, вĕсем Германи çине 20.000 тоннăна яхăн бомба пăрахнă. 8.000 тонна бомбăна яхăн нимĕçсем оккупациленĕ территори çине пăрахнă. Пĕр операци вăхăтĕнче кăна — мартăн 15-мĕшĕнче Штутгарт хулине тапăннă чухне — пин ытла йывăр бомбардировщик пулнă. Ку вăл пĕрремĕш хут çавăн пек йышлăн тапăнни пулнă.

Берлин, Штутгарт, Эссен тата Нюрнберг хулисене питĕ нумай самолетсем вĕçсе кайса вăйлă тапăннă.

Германие март уйăхĕнче 28 каç кайса тапăннă. Нимĕçсем оккупациленĕ территорие Англи авиацийĕ март уйăхĕнче 21 каç кайса тапăннă.

Германи самолечĕсем Англие март уйăхĕнче чылай йышлăн вĕçсе пырса мĕн пурĕ те 6 хут кăна тапăннă.

Англи авиацийĕн Европа çийĕнче март уйăхĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче мĕн пурĕ 331 самолет, ытти фронтсенче 222 самолет пĕтнĕ. Германи авиацийĕн çав вăхăтрах 349 самолет пĕтнĕ, вăл шутра 58 самолетне Англи çинче пĕтерсе тăкнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БУДАПЕШТ ХУЛИНЕ ТАТА НИМĔÇСЕН ЮГОСЛАВИРИ ÇУЛИЕРĔСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕнчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: паян союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри сывлăш-çар чаçĕсенче тăракан йывăр бомбардировщиксем Будапешт хулинчи сортировка станцийĕсемпе авиаци завочĕ çине бомбăсем пăрахнă

«Либерейтор» тата «Вĕçекен крепость» йышши самолетсем Книн хулинчи (Югослави) сортировка станцине тапăннă. Союзниксен самолечĕсем çавăн пекех тата Загреб хулипе Белград хули хушшинчи чугун çул çинчи Брод станцийĕ çине тата Шибеник хулипе Книн хули хушшинчи чугун çул çинчи Дрниш станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Книн—чугун çулсен узловой станцийĕ пулса тăрать, ку станцирен чугун çулсем Фиуме хулинелле тата Шибеникпе Сплит хулисем патнелле каяççĕ.

ГЕРМАНИРЕ УКСАХ-ЧĂЛАХСЕНЕ ТЕ ÇАРА ИЛМЕ ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрих хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, унта çакăн пек хыпарсем илнĕ: Гитлер влаçĕсем Германи çарне çынсем хушса пама хăтланса, резервсене çĕнĕрен «туртса» тухма тытăннă. Юлашки вăхăтра çара йывăр аманнă пирки уксах-чăлах пулса юлнă çынсене те илме пуçланă, аманнă пирки ÿт-пÿ тĕлĕшĕпе питĕ пысăк ситменлĕхсем пулсан та, [illegible]

ДАРНАН КАРАТЕЛЬСЕН ТУРИ САВОЙĂНА КАЙНĂ ЭКСПЕДИЦИЙĔ НИМ ТУМА ТА ПУЛТАРАЙМАН

БРАЗЗАВИЛЬ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио пĕлтернĕ тăрăх, гестаповецсемпе Дарнан отрячĕсем Тури Савойăри француз патриочĕсен кĕрешĕвне пусарса лартма хăтланни пăчланса ларнă. Жозеф Дарнан Тури Савойăри партизансене хирĕç наступлени пуçласа янăранпа икĕ уйăх çитет ĕнтĕ. Анчах та ĕç пĕртте вăл шутланă пек пулса пыман. Пачах та урăхла пулнă, мĕншĕн тесен патриотсем хирĕç тăрасси вăйлансах пырать. Вырăнти мирлĕ халăх партизансене активлăн пулăшать. Партизансем Дарнан отрячĕсене пысăк сухатусем кÿреççĕ. Партизансем Дарнан отрячĕсене сасартăк тапăнаççĕ, сухатусем кÿреççĕ те урăх çĕрелле пăрăнса çухалаççĕ. Партизансем пур çĕрте те пур, анчах вĕсене нипле те тытма çук. Дарнан француз патриочĕсене хирĕç тăнине пусарма пултарайманнине çак факт та лайăх кăтартса тăрать: Тури Савойăра вăрттăн тухакан патриотла хаçатсем халĕ те хăйсен вăхăтĕнче, йĕркеллех тухса тăраççĕ.

ТРАНСИЛЬВАНИ ХАЛĂХĔ ФАШИСТСЕНЕ КУРАЙМАСТЬ

Стамбула çитнĕ хыпарсем тăрăх, Бухарестпа Будапештри влаçсем Трансильванири халăхсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яма пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. Анчах юлашки вăхăтра Трансильвани халăхĕсем хушшинче фашизма хирĕç çырнă листовкăсем сараласçĕ. Вĕсене венгер тата румынсен чĕлхисемпе çырнă. Вĕсенче Румынипе Венгри влаçĕсене вăрçаççĕ. Çав листовкăсенчен пĕринче çапла каланă: «Будапештпа Бухарестри фашистсем майлă ĕçлекен правительствăсем халăхăн пĕр пайне тепĕр пайĕпе хирĕçтереççĕ. Анчах Трансильвани халăхĕсем Хортипе Антонескун фашистла режимĕсене юрайман, вĕсем ирĕклĕхпе демократишĕн пимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçасшăн. Румыни халăхĕпе Венгри халăхĕ хушшинче нимĕнле хирĕçÿ те çук. Çав хирĕçĕве Гитлера сутăннă çынсем çеç чĕртсе ярасшăн».

Румынипе Венгри полицийĕ Кăнтăр Трансильванипе Çурçĕр Трансильванире нумай çынна арестленĕ. Юлашки уйăх çурă хушшинче Çурçĕр Трансильванире пин çынна ытла арестленĕ. Çав çынсенчен нумайăшне Карпат çумĕнчи Украинăри партизансемпе çыхăну тытма хăтланнă тесе айăплаççĕ. (ТАСС).

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Тайăр Тимкки. Сăвăсемпе калавсем. ЧАССР Государство Издательстви. Шупашкар. 1944. 30 стр. Хакĕ 1 т. 50 пус.

1906—1907-мĕш çулсенче ĕçлесе пурăннă поэт-революционерăн кĕнекине «Çăлăнăç», «Чаплă вилĕм юрри», «Шухăш», «Çĕнĕ çул» ятлă сăвăсем тата виçĕ пĕчĕк калав кĕнĕ. Ку сборник Тайăр Тимккин халиччен тĕрлĕ хаçат-журналсенче пичетленнĕ произведенийĕсене пĕр çĕре пустарса кăларнă пĕрремĕш кĕнеке пулса тăрать.

«Ырлăхăра вăрçса илĕр!»—тет Тайăр Тимкки хăйĕн «Чаплă вилĕм юрри» ятлă сăввинче

«Пурте пĕрле пухăнар:
Тĕрлĕ хăрампырсене
Ĕнсе çинчен пăрахар!» —

тет тепĕр сăввинче.

Кĕрешÿ! Çак тĕп шухăш палăрса тăрать 1916-мĕш çулта фронтра нимĕçсемпе çапăçса вилнĕ поэт-граждананăн кашни сăввинче калавĕнчех.

Тайăр Тимккин кĕнекине пур шкулсемпе вулав çурчĕсене те çитерме тăрăшмалла.

„Труд" артельте

Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче Карачъялĕнчи «Труд» артельте ĕçлекенсем савăнăçлă кунсене пурăнса ирттерне. Ун чухне вĕсен хастарлă ĕçне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне парса пысăккăн хакланă. Çак чаплă наградăна илнĕ хыççăн артель коллективĕ фронтпа çĕнтерÿшĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме сăмах панă.

Пĕр иккеленмесĕрех çапла калама пулать: артель коллективĕ хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Артельре ĕç вăйĕ çителĕксĕр, апла пулин те вăл производство планне уйăхран уйăхах ирттерсе тултарать. 1943 çула плана 150 процент ытла тултарнине вĕçленĕ. Артельте ĕçлекенсенчен чылайĕшĕ ĕç нормине икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Сăран тăвакансем Д. Григорьев, И. Алексеев юлташсем çинчен сывăхри ялсенче те ырă ят сарăлнă. Тир тăвакан Яковлевпа Соколова юлташсем, атă-пушмаксем çĕлекен Гляин юлташ та вĕсенчен юлмаççĕ. Вĕсен ĕç виçи—виçĕ норма.

Ĕмăстура мала тухса палăрнă цеха вĕрентпĕр. Цех начальникĕ Петров юлташ, 50 çултан иртнĕскер, хăйне çамрăк çын пек тыткаласа, цехра пĕтĕмпех çамрăксем [illegible] пĕлтерет. Чăнах та, цехра [illegible]

лятса сарă пире виçе-виçе касать. Вăл Лиза ятлă. Пĕчĕкренех çĕвĕ ĕçне вĕреннĕскер, «Труд» артельте ĕçлеме тытăнсанах хăйĕн пултарулăхне кăтартса панă. Халĕ Лиза Осипова икĕ норма ытла тултарса пырать. 1943 çулхи октябрь уйăхĕнче унăн пурнăçĕнче савăнăçлă улшăну пулчĕ. Вăл ВКП(б) членĕн кандидатне кĕчĕ. Çавăнтанпа ĕнтĕ вăл хăйĕн паха примерĕпе цехри мĕнпур çамрăксене стахановла ĕçлеме вĕрентсе пырать. Лиза вĕрентнипе Валентина Бондарева кĕске вăхăтрах професси туянчĕ. Халĕ нормăна ирттерсе тултарать.

Икĕ тантăш—Нина Апполоновăпа Шура Якимова касса хатĕрленĕ пиртен кĕпесем çĕлеççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ытларах та ытларах продукци туса кăларма тăрăшаççĕ.

Артелĕн ытти цехĕсенче те хĕрÿ ĕç пырать. Пĕр вунă çул каярах ку артельте икĕ-виçĕ çын анчах ĕçленĕ. Халĕ 13 цех ĕçлет. Çав цехсен коллективĕсем çĕршывпа фронта кунсерен темиçе вунă пин тенкĕлĕх кирлĕ продукци парса тăраççĕ.

Производство планне тултарнисĕр пуçне «Труд» артель планран ирттерсе фронтовиксен çемйисемпе ачисене пулăшма нумай тĕрлĕ таварсем туса кăларать. [illegible]

тата ытти нумай тĕрлĕ япаласем çĕлесе панă. Пĕр кун хушшинче ĕçлесе илнĕ 2.880 тенкĕ укçана та фронтовиксен çемйисене пулăшма çĕре хывнă.

Юлашки вăхăтра артельте ĕçлекенсем кÿршĕри колхозсене лаша кÿлмелли хатĕрсем юсаса пулăшаççĕ. Октябрьски районри 75 колхозран 42 колхоза пулăшнă та ĕнтĕ.

Каç пулсан артелĕн цехĕсем пушанаççĕ, анчах та хĕрÿ ĕç вĕçленмест-ха. Ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ хăйсен пĕлĕвне ÿстерме кружоксене пухăнаççĕ. Акă паян та артель правлени çуртне Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекене вĕренме пухăнчĕç. Кружок руководителĕ çамрăк коммунист Ленар юлташ Сталин юлташăн сăмахĕсене ăнлантарнă чухне артель ĕçĕсемпе унăн умĕнче тăракан задачăсем çинчен те тĕплĕн чарăнса тăрать. Унтан кружок членĕсем—коммунистсемпе комсомолецсем пĕрин хыççăн тепри тухса калаççĕ.

Артельте ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ художествăллă пултарулăх кружокĕсенче тăраççĕ. Вĕсем хăйсен пултарулăхне ялти ĕççынисене кăтартма хатĕрленеççĕ. Вĕсем ку таранччен «Ялта» тата «Штабра» пьесăсене выляса панă, нумай тĕрлĕ юрăсем юрласа панă. Кузьмин [illegible]

реннĕ. Артельти художествăллă пултарулăх кружокĕсем хăйсен районĕнче кăна мар, кÿршĕри Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ районĕсенчи колхозсенче те пулаççĕ.

«Труд» артель фронтовиксемпе çыхăну тытать. Артельти хĕрсем час-часах посылкăсем хатĕрлесе Тăван çĕршывăн чаплă воинĕсем патне яраççĕ. Кашни посылка ăшне ăшă кăмăллă çырусем çырса хураççĕ. Нумай кĕттермеççĕ фронтовиксем те. Вĕсем хĕрÿ сăмахсемпе хĕрсене фронта пулăшассишĕн хастарлăн ĕçлеме чĕнеççĕ. «Сирĕнпе курса калаçас вăхăт çывхарса килет. Ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасса шанатпăр» тесе хушаççĕ вĕсем е тата хĕрсенчен сăнÿкерчĕксем ярса пама ыйтаççĕ.

Халĕ, мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене совет çĕрĕ çинчен тасатса хĕвеланăçнелле улăпла утăмсемпе кайнă чухне, артельте ĕçлекенсем татах пысăкрах çĕкленÿпе ĕçлеме тытăнчĕç. Хĕрлĕ Çар государство чиккине тухни çинчен хыпар илтсенех çамрăксем те, ваттисем те Хĕрлĕ Çара çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе саламлама тытăнчĕç. Вĕсем май уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме сăмах пачĕç. Вĕсен сăмахĕ ĕçрен уйрăлмасть. Çавна ĕнентерсе параççĕ те ĕнтĕ артель коллективĕ тунă ÿсĕмсемпе çитĕнÿсем.

В. ЛЮБИМОВ.
«ТРУД» АРТЕЛЬ, ОКТЯБРЬСКИ Р.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, **Г. М. Никитин** юлташа, урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Совнарком председатель заместителĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

* * *

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, **Д. Г. Ларионов** юлташа Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —3—23.

ЧТ 00402 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.